# Анаткассинчен – пысăк спорт таран

6 çулта пĕрремĕш хут йĕлтĕр çине тăнă Валерьян ӳссе çитсен те çак «тусне» улăштарман. Ача чухнех йĕлтĕрпе ярăнма питĕ килĕшни пурнăç тăршшĕпех ăна çитĕнӳсем тума пулăшнă. Анаткасси ялĕнче çуралнă Валерьян Гаврилович Гаврилова – районти спорт ветеранне – халĕ таврара пурте пĕлеççĕ. Пурнăç тăршшĕпе ăна юлташĕ Аркадий Логинов та сахал мар пулăшса, хавхалантарса пынă.

Валерьян Гавриловичăн спортри малтанхи çитĕнĕвĕсем 1961 çулта пуçланаççĕ. 14 çулхи çамрăк районти йĕлтĕрпе чупмалли ăмăртура мала тухса палăрать. Ун хыççăн вара тĕрлĕ çулсенче йĕлтĕрпе чупассипе кăна мар, çăмăл атлетикăра та, велоспортра та районта малтисен ретĕнче тытăнса тăрать. Çак çитĕнӳсем ăна районăн пĕрлештернĕ командине кĕме май параççĕ. Вăл республика ăмăртăвĕсене те тăтăшах тухса çӳреме пуçлать. «Урожай» ирĕклĕ спорт обществин облаçри канашĕн первенствин çĕнтерӳçи те пĕрре мар пулнă тăрăшуллă çамрăк. Çирĕм çул тултариччен Чăваш Республикин чемпионĕ те пулса тăрать Анаткасси каччи. 5 тата 10 километрлă дистанцисем «унăн» пулнине çăмăллăнах кăтартса парать. Çитĕнӳсем Валерьян Гавриловича республикăн пĕрлештернĕ командине кĕме пулăшаççĕ. Кунта вара хăвна пысăк спортра кăтартмалли майсем тата ытларах. 1965-мĕш çулта Пермь хулинче иртнĕ РСФСР хĕллехи спартакиадине хутшăнса вăл спорт мастерĕн кандидачĕн нормативне пурнăçлать.

Тепĕр çул хастар спортсмена «Урожай» ирĕклĕ спорт обществăн тĕп командине илеççĕ. Çак çулах вăл Совет çарне каять. Çарта та спорта пăрахмасть. Туркменистанри çар округĕн çăмăл атлетика енĕпе пĕрлештернĕ командинче пулать. Анчах йĕлтĕрçĕ карьери кунпа пĕтмест-ха. Çартан таврăнсан ăна каллех куçран вĕçертмеççĕ. Нумай тренировкăсем иртнерни Валерьян Гаврилова каллех çитĕнӳсем тума пулăшать. СССР спорт мастерĕн нормативне те вăл çартан таврăнсан пурнăçлать. Хыççăнах ăна Саппоро хулинче иртерме палăртнă Олимп вăййисене хутшăнма хатĕрленĕ çĕр-шывăн çамрăк спортсменĕсен пĕрлештернĕ командине йышăнаççĕ. Шел, пирĕн ентешĕн вăйăсенче хутшăнма май килмест.

1969-мĕш çулта Чăваш патшалăх педагогика институтне вĕренме кĕрет. Физкультура воспитанийĕн факультетне ăнăçлă вĕренсе пĕтерне хыççăн тăван кĕтесе таврăнать. Турай шкулĕнче ачасене спортпа туслаштарма сахал мар вăй парать. Вăл ĕçлеме тытăнсан физкультура урокĕсем те интереслĕрех иртме пуçланине унăн вĕренекенĕсем паян та çирĕплетсе калаççĕ. Валерьян Гаврилович хăйĕн вĕрентекенĕсене чăтăмлă пулма вĕрентнĕ, вĕсене те пысăк спорта кăларас тесе чунтан тăрăшнă. Унăн вĕренекенĕсем район тата республика чемпионĕсем пĕрре мар пулнă. Валерьян Гавриловичăн ачисем те унăн çулне суйласа илнĕ.

1976-мĕш çулта Валерьян Гавриловича «Урожай» ирĕклĕ спорт общество çумĕнчи Муркаш районĕнчи ачасемпе çамрăксен спорт шкулне ертсе пыма шанаççĕ. Хăй директор пулса ĕçленĕ вăхăтра Валерьян Гаврилович пĕрлĕхлĕ коллектив туса хума, распублика ăмăртăвĕсенче мала тухма пултаракан чемпионсемпе призерсене чылай хатĕрлеме пултарнă. Вĕсен хушшинче Н. Ястребов, В. Мохнатов, В. Степанова, Л. Герасимова, З. Мохнатова, С. Кириллов, З. Никитина тата ыттисем те. Любовь Миронова (халĕ Плечова) та хăйĕн вĕрентекенĕ пекех çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командинче пулнă, континент масштабĕнчи ăмăртусене те хутшăннă.

1984 çулта Валерьян Гаврилович тăрăшнипе районти вĕрентӳ пайĕ çумĕнче ачасемпе çамрăксен тепĕр спорт шкулĕ уçăлать. Кунта та вăл директор пулса чылай вăхăт ĕçлет. Çăмăл атлетика, йĕлтĕр спорчĕ, биатлон çине ытларах тимлĕх уйăрнă унта. Вăхăт иртнĕ çемĕн çак спорт шкулĕнче волейболла выляссине, ирĕклĕ майпа кĕрешессине, бокса аталантарма пуçлаççĕ.

Нумай çул хушши тухăçлă ĕçленĕшĕн Валерьян Гаврилович Гаврилова «РСФСР спорт ветеранĕ» паллă парса чысланă. Халĕ, тивĕçлĕ канура пулин те, вăл спорт ăмăртăвĕсенчен айккине тăрса юлмасть.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Пирĕн чемпионсем – район мăнаçлăхĕ

## Олимп вăййисен чемпионки

**Валентина Михайловна ЕГОРОВА**. 1964 çулта Исетерккĕ ялĕнче çуралнă, çăмăл атлетика енĕпе СССР (1984) тата тĕнче класлă (1988) спорт мастерĕ, 1992 çулта – СССР тава тивĕçлĕ спорт мастерĕ. Чăваш Ен чемпионки тата рекордсменки, СССР Кубокĕн (1988) çĕнтерӳçи. 1986 çулта СССР тата 1990 çулта Европа призерĕ пулса тăнă. 1994 çулта тĕнче кубокĕнче çĕнтернĕ. 1992 çулхи 25-мĕш Олимп вăййисенче çĕнтерӳçĕ, 1996 çулхи 26-мĕш Олимп вăййисенче кĕмĕл призер пулса тăнă, 2000 çулта марафон чупассипе çуллахи Олимп вăййисене хутшăннă. Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (1992). Ăна «Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» орденăн (2007), «Тăван çĕр-шыв умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» орденăн 2-мĕш степень (1997) медалĕсемпе наградăланă. Унăн ятне Муркашри ачасемпе çамрăксен спорт шкулне тата Муркашри урама панă.

## Тĕнче чемпионĕсем

**Татьяна Юрьевна МОИСЕЕВА**. Муркашри ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн воспитанницы. Муркашра 1980 çулта çуралнă. Биатлон енĕпе Раççей тата тĕнче класлă спорт мастерĕ, Раççей тава тивĕçлĕ спорт мастерĕ (2006). Чăваш Ен, Раççей, Европа ăмăртăвĕсенче мала тухма пултарнă, 2000 тата 2001 çулсенче спринт, пасьюте тата эстафета чупассипе çамрăксем хушшинче тĕнче чемпионки пулса тăнă, 2003 çулта 3 километр чупассипе тата 5 километрлă дистанцире пасьюте енĕпе ăмăртассипе Европа чемпионки пулса тăнă. 2005 çулхи Раççей, 2003 тата 2006 çулсен тĕнче чемпионки. 2004, 2006 çулсенче çуллахи биатлон енĕпе кĕмĕл призер пулнă. 2003 çулта та студентсен пĕтĕм тĕнчери универсиадинче хĕллехи биатлон енĕпе 2-мĕш вырăн йышăннă. 2006, 2007 çулсенче хĕллехи биатлон енĕпе тĕнче кубокĕшĕн ăмăртса иккĕмĕш пулнă.

**Вера Александровна СОКОЛОВА**. Муркашри ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн воспитанницы. Анаткас Апаш ялĕнче 1987 çулта çуралнă. Çăмăл атлетика енĕпе Раççей (2002) тата тĕнче класлă (2002) спорт мастерĕ. Республика ăмăртăвĕсенче çĕнтернĕ, хĕрсем хушшинче 2002 çулта 3-мĕш вырăн, юниоркăсем хушшинче Раççейре (2002–2005) 1-мĕш, 2004 çулта 2-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарнă. 2006 çулта тĕнче рекордсменки пулса тăнă, 2003 тата 2006 çулсенче хăвăрт утассипе команда зачечĕпе Европа тата тĕнче чемпионки пулса тăнă.

## Раççей чемпионачĕн призерĕсем

**Александр Николаевич НИКОЛАЕВ**. Муркашра 1987 çулта çуралнă. Шашкăлла выляссипе спорт мастерĕн кандидачĕ. Шашкăлла выляссипе Чăваш Ен тата Раççей чемпионĕ. 2006 çулта шашкăлла выляссипе юниорсем хушшинче чемпион пулса тăнă, 2006 çулта куç япăх куракан инвалидсем хушшинче 5000 метра чупассипе 3-мĕш вырăна тивĕçнĕ.

**Вера Григорьевна СТЕПАНОВА**. 1960 çулта Турай ялĕнче çуралнă. Йĕлтĕр спорчĕ енĕпе (1982), биатлон енĕпе (1988) СССР спорт мастерĕ, Чăваш Республикин чемпионки. Раççей (1988) тата ВЦСПС (1989) ăмăртăвĕсен кĕмĕл призерĕ пулса тăнă. Ачасемпе çамрăксен «Урожай» ирĕклĕ спорт обществин воспитанницы.

## Пулас пенси ыйтăвĕсемпе

# Пенси виçине ӳстерес тесен

2008 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса граждансен ĕç пенсийĕн пухăнакан пайĕ çине хăйсен ирĕкĕпе взноссем куçарса пулас пенси виçине ӳстерме май пур. Çавна валли граждансен çулталăкне 2 пин тенкĕрен кая мар взноссем хывмалла. Патшалăх 1,1 виçепе хушма укçа уйăрса парать, анчах та çулталăкне 12 пин тенкĕрен ытла мар.

Пенси çулне çитсен (хĕрарăмсен 55 тата арçынсен 60 çул) çын пенси илме тытăнмасть пулсан, патшалăх вĕсене 1,4 виçепе (анчах та çулталăкне 48 пин тенкĕрен ытла мар) укçа куçарса парса пулăшать.

2008 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2009 çулхи январĕн 12-мĕшĕччен районти 471 çын хушма страховани взносĕсем тӳлесе тăма заявленисем çырнă. Ку ĕç малалла пырать.

Хăвăра интереслентерекен ыйтусемпе Пенси фончĕн районти управленине 2–21–91 тата 2–25–41 телефонсемпе шăнкăравлама пултаратăр.

**О. АЛЕКСЕЕВА,**
**Пенси фончĕн районти управленийĕн пай пуçлăхĕ.**

## Официально

**Моргаушская территориальная избирательная комиссия**
**РЕШЕНИЕ**
**24 февраля 2009 года №57/1**

**Об аннулировании регистрации кандидата в депутаты Собрания депутатов Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики по одномандатному избирательному округу №4 Васильевой Елены Николаевны**

Рассмотрев заявление кандидата в депутаты Собрания депутатов Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики по одномандатному избирательному округу № 4 Васильевой Елены Николаевны о снятии своей кандидатуры, руководствуясь статьями 38, 76 Федерального Закона «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», Моргаушская территориальная избирательная комиссия **решила:**

1. Аннулировать регистрацию Васильевой Елены Николаевны кандидатом в депутаты Собрания депутатов Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики по одномандатному избирательному округу № 4 (решение Моргаушской территориальной избирательной комиссии № 53/1 от 19 января 2009 года) и аннулировать удостоверение, выданное Моргаушской территориальной избирательной комиссией Васильевой Е.Н.
2. Направить настоящее решение в газету «Çĕнтерӳ ялавĕ» для опубликования.

**Председатель территориальной избирательной комиссии А.В. АНДРЕЕВ.**
**Секретарь территориальной избирательной комиссии В.К. СОРОКИНА.**

## Прогноз погоды с 28 февраля по 7 марта

www.yandex.ru

| сб 28 | вс 1 | пн 2 | вт 3 | ср 4 | чт 5 | пт 6 | сб 7 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| облачно, небольшой снег | облачно, небольшой снег | облачно, небольшой снег | перем. обл., небольшой снег | снег | облачно, без существ. осадков | облачно, без существ. осадков | снег |
| 0 | -1 | -2 | -1 | -1 | 0 | 0 | 0 |
| -2 | -5 | -14 | -5 | -1 | -4 | -1 | -1 |

## Муркашра - Хĕл ăсатăвĕн уявĕ

*Мартăн 1-мĕшĕнче 11 сехетре Физкультурăпа спорт комплексĕ умĕнчи лаптăкра Хĕл ăсатăвĕн уявĕ пуçланать.*

*Программăра «Расна», «Муркаш», «Çеçпĕл» ансамбльсемпе ача-пăча коллективĕсен концерчĕсем, спорт ăмăртăвĕсем, лашасемпе катаччи чупасси.*

*Муркаш ял тăрăхĕ пурне те уява чĕнет.*


## Пĕлтерӳсем. Объявления

Продам в комплекте персональный компьютер, стол компьютерный, кресло офисное, игровую приставку «Руль-педали». Все в отличном состоянии. Тел.: 8-927-991-66-30.

Требуются рабочие в колбасный цех. Оплата сдельная. Адрес: д. Сюрлатри. Тел.: 63-4-10, 8-927-857-96-72. 1-3.

Продаю бетонные блоки высокого качества, пропаренные, вибропресованные, 20х20х40 - 38 руб., перегородки от 28 руб. с доставкой. Тел.: 8-902-663-37-77. 5-5.

ИП Ершов А.В. делает на заказ банные печи любой формы, а также гаражные, уличные ворота. Продает угольники, швеллера, трубы на забор и ворота. Доставка. Обращаться по тел.: 8-919-655-21-51 (Моргауши, плодокомбинат). 5-5.

Продаю кирпич: керамический одинарный, полуторный, двойной; силикатный: белый, желтый, серый; блоки керамзитные, пеноблоки, кольца колодезные, шифер, цемент. Доставка бесплатно, услуги автотранспорта, крана манипулятора. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-88-00-483. 7-7.

ИП Баранов Э.И. продает строительные материалы: доски хвойные обрезные, брусья, металл-швеллеры, угольники, трубы, цемент, шифер. Обращаться в «Моргаушагропромснаб» или по тел.: 8-903-346-40-58. 4-5.

Продаю блоки керамзитобетонные пропаренные, цемент. Дешево, доставка. Тел.: 8-902-328-87-87, 8-902-327-55-65. 8-9.

Продаю кольца колодезные, гравмассу, песок, керамзит, цемент, КБ 20х20х40, кирпич силикатный, красный. Тел.: 8-902-287-13-29, 8-902-328-02-38. 2-4.

2 марта с 9-00 часов до 18-00 часов в ДК с. Б. Сундырь, с 10-00 часов до 17-00 часов в ДК с. Моргауши – только один день – состоится распродажа *зимней обуви* из натуральной кожи и меха.
Любая пара – *1000 руб*.
Комплекты *постельного белья* по *300 руб*.
Гарантия экономии и комфорта.

Продаю сани конные новые 2 шт.: рабочий и парадный и снаряжение. Тел.: 8-903-346-96-50.

Утă сутатăп, хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Адресĕ: Мăн Сĕнтĕр ялĕ. Тел.: 8-960-310-70-37.

Свидетельство о восьмилетнем образовании А № 871225, выданный 28.08.1969 г. Чуманкасинской средней общеобразовательной школой на имя Антоновой Нины Васильевны, считать недействительным.

ЦЕМЕНТ – М-400
40 кг – 160 руб. 1-5.
«Моргаушагропромснаб»
Тел.: 8-903-346-40-58.

Вăкăрсем, тынасем, сурăхсемпе такасем туянатăп. Тел.: 8-903-063-07-57.

Продается трактор МТЗ-80 в рабочем состоянии 1981 года выпуска, трактор МТЗ-80 1985 года выпска, тележка 2ПТС-4 старого образца. Тел. для справок: 8-927-864-31-33, 67-5-48. 1-2.

Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150, керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмасса, керамзит. Доставка. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97. 1-10.

Продаю кирпичный дом в селе Моргауши. Тел.: 8-927-865-98-94.

Срочно продаю жилой дом с приусадебным хозяйством в Моргаушах. Тел.: 8-908-843-88-75. 1-2.

ПОЛЬЗУЙТЕСЬ СКИДКОЙ
ООО «Энергосервис» реализует населению и организациям за наличный и безналичный расчет кольца ж/б для колодцев и выгребных ям. Скидка 20%, транспорт до 10 км бесплатно. Выполняет электромонтажные работы внутренней и наружной электропроводки. Строительство ВЛ-10кв, ВЛ-0,4 кв и КТП4. Тел.: 60-2-39, 8-905-342-98-11.
Администрация.


Шатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ кунта электрик пулса ĕçленĕ
**Александр Павлович ВОЛКОВ**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки ял-йышпа тата тăванĕсемпе тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

«Сывлăх» ФСК коллективĕ кунта ĕçлекен В.В. Иванов рабочин пиччĕшĕ
**Андрей Витальевич ИВАНОВ**
вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркашри выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен патшалăх учрежденийĕ кунти ветеринари лаборатори заведующийĕн Л.А. Бояринован ашшĕ
**Алексей Васильевич ВОЛКОВ**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.


Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор - 62-1-36, ответственный секретарь - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики и социальной жизни - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 2 усл. печатных листа.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Белов А.П.
Номер подписан 27.02.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 4025.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.